«Суяс пур-тăк, пĕттĕр пуçăм...»

Денис Гордеев – писатель, идеолог, кĕрешӳçĕ

– Мĕн хистет сана çак лава туртма?

– Писатель вăл – халăх совеçĕ. Акă, халĕ те санпа тĕл пулса калаçма утнă майăнах çул çинче урамри тĕрлĕ витринăпа плакат çинче «sex» сăмаха пĕр вунă хутчен тĕл пултăм. Атя, вырăсла калар вăл сăмаха? Атя, чăвашла калар? Çынсем куçне-пуçне чарса пăрахнă пулĕччĕç. А вăт «sex» тетпĕр те – виçеллĕ сăмах пекех илтĕнет пире. Тĕрĕссипе каласан, сăмах ирĕклĕхĕ тесе, «sex» сăмаха ăçта кăна персе яратпăр! Чим-ха, вăл сăмаха хаçатра çырма çеç мар, хăлхаран калама та именмелле вĕт!

МИХАЙЛОВ Ю. 0117хh-07

■ Денис Гордеев "Тăван Ен" хаçатра хăнара. 2007 çул.

Çут тĕнчере писатель профессийĕ пур. Нимле хисеплĕ ят та мар вăл, обществăлла статус та мар. Юлашки тĕп профессионал-поэт пирĕн Георгий Ефимов çĕре кĕчĕ. Унччен пурте профессионал пулса пурăннă, урăхла каласан, литература ĕçне хăйсен пĕртен-пĕр ĕçĕ тунă. Вĕсем пирĕн валли хăйсен пуян еткерлĕхне хăварма пултарнă, ыттисем пит хăварайман. Илер-ха, акă, «Чупрăм-тухрăм урама» юрă авторне Николай Прокопьева. Кам пĕлет ăна халь? Хăйне кура талантлă çын пулнă вăл, анчах профессионал-писатель пулман та, çырас тенине çырса пĕтерейменен. Куçма Турхан писатель-профессионал пулса ĕçлемен пулсан, «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романĕ пулмастчĕ. Хветĕр Уярăн «Шурча таврашĕнче» романĕ те пулмастчĕ. Ун чухне вĕт кашни писателе пĕр çулталăкра кану çурчĕсемпе санаторисене виçĕ путевка панă. Çырма условисем пулнă. Манăн ачасем «Кувшинкăрах» çитĕнчĕç. Çемье членĕсене уйăхне 45 тенкĕ ларатчĕ унта канма. Ăна тӳлеме пултарнă ĕнтĕ эпир.

Халь писатель профессине пĕтернĕ. Ыран тӳлеме пăрахсан, учитель те пулмасть, воспитатель те, строитель те пĕтет. Тӳлеме пăрахрĕç те, халĕ, акă, пирĕн писательсем хăйсен ĕçĕпе çеç пурăнаймаççĕ, çăкăр çимелĕх ытти çĕрте ĕçлеме тивет. Пире, акă, виçĕ союзăн йышлă членĕсене «литература çумĕнче çапкаланса çӳрекенсем» тесе калама пулать. Урăх никам та мар эпир халь. Пирĕн нимĕнле право та çук.

Писатель кам вăл халăхшăн? Писатель пулмасан, наци пулма пăрахать. Литература вăл – чĕлхе управçи. Эпир пурте литература тĕслĕхĕпе ӳссе çитĕннĕ çынсем. Пирĕн чĕлхе пуянлăхĕ, тасалăхĕ литературăра упранать. Çавна ма ăнланмастпăр эпир? Литературăна халь шоу-бизнеспа хупласшăн. Ăслă шӳтпе мар, сатирăпа та мар, пӳрне кăтартса, кут силлесе култаратпăр халь халăха. Ку вăл халăхран кулни пулать. Литература критики те пĕтрĕ темелле. Çавна çĕклес пулать. Унсăрăн аталану пулмасть.

– Чăваш писателĕ пулас тени, чăвашлăхшăн ĕçлесси ăçтан пуçланчĕ-ха?

– Вăл акă мĕнрен пуçланса кайрĕ. Вырăссем «шестидесятник» тесе палăксем лартаççĕ вĕт-ха, «Хрущев тапхăрĕ» пирки калаççĕ. Эпир, пединститутра пĕрле вĕреннĕ туссем, шăпах çав юхăма кĕрсе кайнăччĕ – Геннадий Юмарт, Алексей Вирьял, Вениамин Тимаков, Васлей Игнатьев, Виталий Никитин, Мария Волкова, Андрей Алексеев, Валерий Егоров, Виталий Чекушкин. Сăмаха уççăн калама ирĕк пачĕç пире ун чухне. Эпир чăвашлăх ыйтăвне çивĕч тăратрăмăр, пединститута Иван Яковлевич Яковлев ятне парасшăн ыйту хускатрăмăр, Çеçпĕл Мишшин вил тăприне куçарса килес тесе çĕклентĕмĕр. Анчах, акă, 1956 çулта ашшĕ-амăшĕсем ыйтнă тесе, парти обкомĕнчен чăваш шкулĕсенче чăвашла вĕрентме пăрахтарас тесе тапăнма пуçларĕç, пирĕн Михаил Сироткин ученăя обкома чĕнсе илсе хĕсме пуçларĕç. Эпир пурте пĕрле кар! тăтăмăр: «Чăваш шкулĕсенче чăвашлах вĕрентмелле!» тесе тавлашма пуçларăмăр. Ун чухне КГБ пирĕн патран хăпма пĕлмен. Литература кружокĕн «Шанчăк» хаçачĕ тавра чăмăртаннăччĕ эпир. Пире хирĕç комсомол активисчĕсене яратчĕç. «Сирĕн чăвашлăхăр мĕн тума кирлĕ? Эпир – интернационалистсем!» - тетчĕç вĕсем. Эпир вара вĕсене хирĕç: «Пирĕн Иван Яковлев пур, пирĕн Çеçпĕлпе Иванов пур!» – теттĕмĕр. Çапла хытă тавлашса хам та тăн çухатсах персе аннă. Çавăн хыççăн вара Геннадий Юмарта, Виталий Чекушкина, Андрей Алексеева, Валерий Егорова ют республикăна дипломсăр ĕçлеме кăларса ячĕç.

Нушине нумай куртăм эпĕ, литературăна çав тери пысăк асаппа кĕтĕм. Сăмахран, ача-пăча валли хатĕрленĕ кĕнекене пичетлемесĕр тытрĕç. Пурĕ те пĕр икĕ предложени çеç тӳрлетнĕ иккен. «Суяс пуртăк, пĕттĕр пуçăм» тенĕ сăмахсене «Суяс пур-тăк, шăнтăр юнăм» тесе тӳрлетнĕ. Вырăсла шухăшласа çырнă япала. Эп нихçан та ун пек çырас çук!

– Мĕнле куратăр çыравçăсен малашлăхне?

– Халь пирĕн мĕнле те пулсан вакланнă союзсене пĕрлештерсе пĕр союз тумалла. Литературăпа пропаганда пайне çĕнĕрен йĕркелемелле. Кăларма чарнă «Ялав» журнала çĕнĕрен чĕртсе тăратмалла. Çамрăк ятсем пур пирĕн, анчах та çирĕп редактор алли кирлĕ. Хăй вăхăтĕнче Петĕр Львов, Николай Григорьев, Аркадий Малов питĕ вăйлă редакторсемччĕ. Владимир Садай редакцилесе паман пулсан, Краснов-Асли пулатчĕ-ши? Николай Григорьев редакцилемен пулсан, Никифор Мранькка, Василий Алентей пулатчĕ-ши? Акă тата паянхи куна илер. Ангелина Павловскаян çĕнĕ кĕнеки тухнă. Эпĕ унăн малтанхи япалисене те вуланă. Редактор алли пулсан, чăн-чăн лайăх произведени тума пулать. Улькка Эльмен пирки те çавнах каламалла.

– Тĕп геройсене ăçта шыратăн? Пурнăçран илнĕ-и вĕсене е пуçран?

– Темшĕн манăн произведенисенче шăпасăр ачасем нумай. Халь эпĕ тин кăна «Тăван Атăл» журнала «Шăркалчă» ятлă повеç кайса патăм. Унта пиелесе пăрахса хăварнă ачана пăхса ӳстерсе çын туни çинчен каланă. Ун умĕн çырнă «Турă алăкĕ» повеçре те тăлăх ача шăпи сăнарланнă. Те хам çамрăк чухне ача çуртĕнче воспитательте ĕçлени витĕм парса тăрать? Арăмпа иксĕмĕр çуратса ӳстернĕ ачасене пĕрне те кутран тапма мар, усал сăмах каласа та, сасă хăпартса та курман. Арăм та çавах.

– Миçе ача сирĕн? Кам пулса ĕçлеççĕ?

– Асли, Алена, – учительница. Вăталăххи, Светлана, – писатель. Кĕçĕнни, Артур, Ханты-Мансийскра энергетик пулса ĕçлет, инженер.

Кашни произведенин хăйĕн историйĕ. Манăн аслă пиччен ывăлĕ хăлхасăр пулнăччĕ. Ăна Çĕрпӳ районĕнчи Чурачăкри интерната кайса ячĕç. Çав ача пирки чылай шухăшласа çӳрерĕм. Хăлхасăр ача пирки тата «Комсомольская правда» хаçатра та статья пичетленнĕччĕ. Хăлхасăр мăнукне асламăшĕ мĕн пур концертсене илсе çӳренĕ. Пĕррехинче Махмуд Эсенбаев концертĕнче пулнă вĕсем. Тĕнчипе паллă танцор «Макумба» ташă ташланă. Çавăн чухне ача сасартăк кăшкăрса янă: «Илтетĕп! Илтетĕп!» – тенĕ. Шăпах тата çав вăхăтра Шупашкара та Махмуд Эсенбаев килнĕччĕ. Эпĕ вара «Макумба ташши» калав çырса пăрахрăм.

– «Çурта кунĕ» кĕнекере эсĕ юхха хĕрарăмсем çинчен çырса кăтартатăн. Амăшĕ те çапла пулнă, хĕрĕ те проститутка. Вĕсене те паллатăн-и?

– Çук, хам кайман вĕсем патне, тӳссе курман. Юнашар та ларман. Çывăх пĕлмен эпĕ вĕсене. Муркаш хаçатĕнче ĕçленĕ чухне пулса иртрĕ ку ĕç. Унтан Саратов енне пысăк магистраль иртсе каятчĕ. Санэпидстанци пуçлăхĕ милици органĕсемпе пĕрле çав магистраль çинче çӳрекен проституткăсене тытма каятчĕ. Венери чирĕпе чирлĕскерсене ирĕксĕр больницăна хупса хурса сывататчĕç. Санэпидстанци пуçлăхĕ каласа панипе çырнă япала пулчĕ ку. Хĕрачин ятне çеç улăштарнă.

– Чĕлхе пуянлăхне мĕнле тупса пыратăн?

– Ялта, халăх хушшинче çӳрени питĕ чĕлхене уçать. Эпĕ пĕррехинче Комсомольски районĕнчи Хирти Сĕнтĕр ялне кайрăм. Çавăнта çĕнĕ сăмах тупса килтĕм. «Сассу йăнтăр» теççĕ. «Сассу çĕттĕр» тенипе пĕр пекрех ĕнтĕ. Анчах епле хитре сăмах! Эпир илтмен сăмахсем халăхра халь те пур. Чĕлхе тути, сĕткенĕ, пылакĕ – йăлтах халăхра.

ЛЮДМИЛА САЧКОВА

> Тĕрĕссипе каласан, сăмах ирĕклĕхĕ тесе, «sex» сăмаха ăçта кăна персе яратпăр! Чим-ха, вăл сăмаха хаçатра çырма çеç мар, хăлхаран калама та именмелле вĕт!


САЧКОВА Л. 0823xh

Кĕскен

Денис Викторович Гордеев 1938 çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче Комсомольски районне кĕрекен (ун чухне Йĕпреç районĕ пулнă) Асанкасси ялĕнче çуралнă. Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Комсомольски районĕнчи «Октябрь ялавĕ» хаçатра ĕçленĕ, Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакторĕ пулнă. Чăваш кĕнеке издательстви директорĕнче, «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн пай редакторĕнче, Литфондра, Чăваш телевиденийĕнче вăй хунă.

2008 çулта ăна чăваш халăх писателĕн ятне панă.

«Куççăр çĕр улми», «Пăсташ», «Каçма», «Хĕрес хывнă хĕвел», «Улăп тăпри» романсен, 30 повесть, 200 ытла калав авторĕ.